Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* N 70 (4639) *1998 çулхи июнь (çĕртме) уйăхĕн 20-мĕшĕ, шăмткун* *Палăртнă хакпа.*

## Июнĕн 22-мĕшĕ - Тăван çĕршыва хӳтĕленисене асăннă кун. Аслă Отечественнăй вăрçă пуçланнă.



## Июнĕн 21-мĕшĕ - Медицина ĕçченĕсен кунĕ

### Саламлани

Ыран - медицина ĕçченĕсен професси уявĕ. Ку тĕнчери чи пархатарлă та ыркăмăллă, çынсене юратакан професси. Чирлĕ çынсене сиплесси, вĕсене эмелсемпе тивĕçтересси тата санитарипе эпидемиологи шайне вĕсемпĕн усăллă тытасси - çак пысăк та кирлĕ задачăсен комплексне сире шанса панă, эсир вара ăна ăнăçлă пурнăçлатăр. Сирĕн [ăс]тлă тата туйăмлă аллăрсем, ырă кăмăлăр, [с]ыхалану сăмахĕ çынсене ялан кирлĕ.

Хальхи вăхăтра отрасль чылай йывăрлăхсем чăтса ирттерет, анчах та эсир пирĕн сывлăх сыхлавĕн йăли-йĕркисене упраса пуянлатасса, пуçланă реформăсене малалла тăсасса тата хăвăрăн профессие ăсталăхне çирĕплетессе эпир шанатпăр.

Сире пурне те - общество умĕнче явап тытакан çынсене - врачсене, медсестрасене, провизорсене, ЦГСЭН тата профилакторисен ĕçченĕсене уяв ячĕпе саламлатăп, çирĕп сывлăх, телейпе мир, тăнăçлăхпа савăнăç сунатăп.

Ф.СИБАГАТУЛЛИН,

халăх депутачĕсен пĕрлештернĕ Нурлат Совечĕн председателĕ, районпа хула администрацийĕн пуçлăхĕ.

## УТÇИ ТАПХĂРĔ

Вĕри хĕвел паккуссенчи ута самантрах типĕтет. Ял çыннисем, тырăсене шăваракан çумăра чăтăмсăр кĕтекенскерсем, курăксене хăвăртрах пухса илсе, вĕсене хĕле çителĕклĕ хатĕрлеме тăрăшаççĕ.

- Урăхла пулма та пултараймасть! - тет “Рассвет” ассоциаци председателĕ А.Н.Рахматуллин. - Обществăлла вырлăхçĕрлĕхе хĕлĕпе тутă усрас тесен... пире пĕр тонна питĕ паха утă кирлĕ.

Çавăнпа та нумай çул ӳсекен курăксене утăлăх пухса илесси паян ял çыннисемшĕн тĕп ĕç пулса тăрать. Курăксем вăйлă ӳсме тытăнсанах вырлăх апачĕ хатĕрлекен звено утçине тухнă. Вăл 63 гектар йышăнакан хирте 5 капан хывма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ, Рушан Хусаинов утă çулакансем хыççăн хире апатлантарассине пурнăçланă. Кăçал ĕçе кунта шăп çапла йĕркеленĕ: курăксене çулса илнĕ хыççăн - участоксене хушса апатлантараççĕ. Çак уйсенчен тепĕр тухăç ӳстерсе илме пулать вĕт! Çавăнпа та кăçал кунта кивĕ участоксене çĕнетессине тимлĕх уйăрма манман. Лайăхлатнă çарансене (57 гектар) тата 62 гектар йышăнакан тепĕр участока çĕнетнĕ. Шăваракан участоксенче те ĕç чарăнса тăмасть. Вĕсенчен пĕринче Мутагир Гафуров мотористпа Наиль Самерханов шăваракан вăй хураççĕ, теприн çинче - Хамзя Бикиевпа Касым Файзуллин. Çавăнпа та курăк кунта сĕтеклĕ, çăра. Вăрмана кĕрсе каякан хирте вара пачах та шăрăха туймаççĕ тейĕн. Тракторсен шавĕ, çынсем хытă калаçни, паккуссем, ырă шăршлă утă капанĕсем - кусем пурте пĕлекен утçин палăрăмĕсем. Техника шавĕ иртен тытăнса каçчен шăпланмасть. Ку 102 гектар йышăнакан нумай çул ӳсекен курăксен уйĕ чи пысăкки. Анчах та юлашки мар. Çавăнпа та косилкăсемпе вăй хуракан Фанис Тухватуллинпа Ирек Губайдуллин массăна паккуссене çулса пĕтерсен лайăхлатнă пĕрремĕш çарана васкарĕç. Кунта ĕçе ПК-1,6 пресс-подборщиксемпе стогометательсене шанса панă. Акă пĕри подборщик çинчен сиксе анса пире хирĕç утать. Ку Ильсур Абдуллин вĕт! Кăçал вăл тырпул пуçтарнă çĕре хутшăнма шухăшламасть-им?



- Паллах, тырçинче пулăп, - тет вăл. - Манăн “Дон” хушасса çеç кĕтет. Халлĕхе вара утă пуçтарма пулăшатăп. Унăн механизатор стажĕ 15 çул шутланать, вĕсенчен 10 çулĕнче вăл вырлăх апачĕ хатĕрленĕ çĕре хутшăнать. Эпир унран ашшĕ, Ахат пичче çинчен ыйтса пĕлтĕмĕр.

- Çапла, канать. Анчах та мастерскойра пулса курмасăр лăпланмасть, - тет Ильсур.

Тĕрĕс, чăн-чăн çĕр ĕçченĕн чĕри нихăçан та канăç пĕлмест! Паллах ĕнтĕ, хирсенче ĕçсем мĕнле пыни çинчен ывăлĕнчен яланах ыйтса пĕлет. Мĕнпур çĕнĕлĕхшĕн савăнса, кăмăллăн итлет, тет Ильсур. Урăхла мĕнлеха, вăл унăн юлташĕсене - ПК-1,6 косилкăпа ĕçлекенсене Ришат Сунгатуллинпа Халиль Самерханова, капан хывакан Ахат Ишмухаметова питĕ лайăх пĕлет вĕт. Яшсем чăннипех тăрăшуллăскерсем, тӳрĕ кăмăлпа ĕçлеççĕ. Утă пуçтаракансем Виталий Филипповпа Александр Анисимов, шыв турттаракан Валиахмет Галимов пенсионер та вăйсене шеллемесĕр тăрăшаççĕ.



Председателĕн апатсем хатĕрлес енĕпе ĕçлекен çумĕ Зиятдин Сатдаров та ялан тенĕ пекех утă çулнă çĕрте пулать. Çав вăхăтрах вырлăх апачĕн картишне йĕркене кĕртеççĕ: тасатаççĕ, траншейăсене шуратаççĕ. Çапла, утă хатĕрлес ĕçе вăхăтлă пурнăçламалла вĕт. Çынсен кăмăл-туйăмĕсене те çĕклеме пĕлмелле. Çавăнпа та сывпуллашнă чухне З.Сатдаров пире хуçалăх ĕçченĕсен ятĕнчен çапла каларĕ: "Агитбригада килсенччĕ. Ял çыннисем вĕсен ĕçне тимлĕх уйăрнине питĕ юратаççĕ".

Утă çулакансем çине пăхсан эпир вĕсем ырми-канми ĕçленинчен питĕ тĕлĕнтĕмĕр: çакăн пек чăтма çук шăрăх çанталăкра та вĕсем кăмака пек хĕрсе кайнă машинисене, сеңĕкĕсене аяккине пăрахса сулхăна каясси çинчен шухăшламаççĕ те. Чăнахта, çак çынсем хисепе тивĕçлĕ.



С.ХАЙРУЛЛИНА.

**Н.Азизов ӳкерчĕкĕсенче: Ахат Ишмухаметов (çӳлте); Ильсур Абдуллин (аялта); стогометатель ĕçре.**

***Уяв умĕнхи интервью***

*А.Л.Клементьев:*

## "ĂНĂÇЛĂХ ĔÇЛЕМЕ ХАВХАЛАНТАРАТЬ"

**Хальхи вăхăтра сывлăх сыхлавĕ çинчен çиелтен кăна çырсан вулакансем ăнланмĕç. Экономика ларӳтăрăвĕ çивĕчленнĕçемĕн çивĕчленсе пырать, калаçура медиксем укçа çинчен питех хускатмаççĕ пулин те, çак система халь чăтса ирттерекен тапхăра лайăх тесе нимĕнле оптимист та калаймасть.**

**Йăлана кĕнĕ тăрăх кашни канашлура, калаçусенче пĕр ыйту тухса тăрать: мĕнпе пурăнмалла-ха, çак лару-тăруран мĕнле тухмалла? Нурлатри тĕп больница та, паллах ĕнтĕ, çакăнтан аяккинче тăрса юлаймасть, кунта та тăкаксене чакарнăçемĕн чакараççĕ. Чирлĕ çынсем стационара хăйсен эмелĕсемпе пынине халь мода тесе калама çук ĕнтĕ. Хальхи вăхăтра кун пек тумасан май çук, сахал тупăш илекен çынсене тутă апат е кирлĕ медицина препарачĕ туянассине суйлама хистет. Турă кăна сывлăх патăрччĕ ĕнтĕ: таблеткăсем, тĕрлĕ шĕвексем, маçсем хальхи вăхăтра йӳнех мар.**

**Нурлатри тĕп больницăн тĕп врачĕпе Аркадий Леонтьевич КЛЕМЕНТЬЕВПА эпир хулапа район администрацийĕнче финанс ыйтăвĕсене тишкерсе тухнă анлă канашлу хыççăн тĕл пултăмăр.**

- Лару-тăру питĕ кăткăс, пире укçа-тенкĕ нумай уйăрса парасса шанчăк çук. Парăмсем вара пур. Юрать-ха пĕрпĕрин хушшинчи тӳлев пулăшать. Пире вара нумай шантармаççĕ: укçатенкĕ чирлисене апатлантарма, медикаментсем валли тата коллектива ĕç укçи тӳлеме çеç уйăраççĕ. Çавăнпа та васкавлă медицина пулăшăвне тивĕçтернĕ май, каярах сипленсе çитме пациентсен хăйсен тăкакланма тӳр килет. Ку эпир çакăнпа килĕшсе лăпланнине пĕлтермест. Ĕçри ăнăçлăх яланах ĕçлеме хавхалантарнă - халь вара пачах та унсăр юрамасть. Çавăнпа та эпир пĕтĕм звеносене пахалăхлăрах тата тухăçлăрах ĕçлеттерме ялан çĕнĕ çул-йĕрсем шыратпăр. Элмет участок больницинче, райони тĕп больницăн йышăну уйрăмĕнче, лабораторире, юна пĕр çынран теприне яракан уйрăмра, патолого-анатоми корпусĕнче, кухньăра юсав ирттертĕмĕр. Терапипе хирурги уйрăмĕсенче вăрçă ветеранĕсем валли палатăсем оборудованилерĕмĕр. Поликлиника территорине тирпей-илем кĕртрĕмĕр, кунта тата аптека киоскĕпе буфет туса пĕтеретпĕр. Çитес çывăх вăхăтра поликлиникăра лифта хута ярăпăр. Хуçалăх кунта питĕ кăткăс, йывăрлăхсем çителĕклĕ. 30 тонна пахчаçимĕç упрамалли вырăн тума проект хатĕрленĕ, часах ăна хăпартма пуçлăпăр. 100 киловатлăх дизель туянма планланăччĕ - укçа çук. Ялсенчи фельдшерпа акушер пункчĕсенчен 60 процентне юсамалла, холодильниксемпе тивĕçтермелле, телефонсем кĕртмелле - кусем те шухăшлаттараççĕ.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

*Ĕнерхи почтăран*

## Ĕçе хăнăхса вĕренеççĕ

Эпĕ Аслă Отечественнăй вăрçа хутшăннă çын тата педагогика ĕçĕн ветеранĕ. Юлашки 14 çул хушши шкул-интернатра вăй хутăм, вĕсенчен 12 çулне директорăн вĕрентÿпе воспитани парас енĕпе ĕçлекен çумĕ пулса. Халь пенсире, анчах унта час-часах пулкалатăп, мана вара хаклă хăна пек кĕтсе илеççĕ.

Шкул коллективĕ çĕнелчĕ, çамрăкланчĕ, çапах та аслисене хисеплесси, вĕсене тимлĕх уйăрасси сыхланса юлнă. Ватă çынсен, Тăван çĕршывăмăра хÿтĕлекенсен кунĕсем тата Аслă Çĕнтерÿ кунĕ тĕлне вĕренекенсем пысăк концертсем хатĕрлеççĕ тата сувенирсем парнелеççĕ. Сĕтел те хатĕрлеççĕ.

Шкул ертÿçисем вĕренсе тухакансене хăйсем тĕллĕн пурăнма, ĕçе хăнăхтараççĕ. Хĕрачасем çĕлеме вĕренеççĕ. Арçын ачасем столяр тата слесарь ĕçне алла илеççĕ. Ку енĕпе вĕсене пысăк опыт пухнă учительсем, уйрăмах М.В.Спасов, А.В.Зиничев, З.М.Сафиуллина тата ыттисем нумай пулăшаççĕ. Арçын ачасем хăйсен ăсталăхне манăн гаража çĕнĕрен витнĕ чух кăтартрĕç. Ĕçе хăвăрт та паха пурнăçларĕç. Маншăн питĕ усăллă ĕç тунăшăн вĕсене тата преподавательсене чунчĕререн тав тăватăп. Вĕсене пурне те ăнăçлăхсем, çирĕп сывлăх, телей сунатăп.

Нумай çул хушши ĕнтĕ шкул-интернатра вĕренекенсен вăйĕпе апатçимĕç каяшĕсемпе 5-6, хăш-пĕр чухне вара ытларах та пуç сысна самăртаççĕ. Çапла майпа, ачасем йăла ĕçĕ-хĕлне хăнăхса ÿсеççĕ. Сысна ашне сутнă укçапа хуçалăх тата культура тĕллевĕсемшĕн усă кураççĕ.

**М.ЛОГИНОВА.**

*Хăна юррисем*

## Ял çине тухсассăн лайăх çÿре

Турилкке-турилкке сар çăмарта,
Чут-чут шуратмасăр çиеттĕм.
Çак тăвансем патне, ай, килсессĕн,
Чут-чут юрламасăр каяттăм.

Шурă пÿртĕр умне шăлса тытăр
Мамăк калпаксемпе выляма.
Вĕренсе юл, тăванăм, çакă юрра
Эпĕ асна килсен юрлама.

Эп юрласа парсан эс мĕн паран,
Тара та тутрисене парăн-и?
Тулашĕсем пурçăн, ай, пулчăр-и,
Ăшĕсене кĕмĕл те ярăн-и?

Кĕске кăна сăхман, кĕмĕл тÿме -
Юр ан çутăр, тăванăм, ху çине.
Ял çине тухсассăн лайăх çÿре,
Сăмах ан ил нихçан та ху çине.

Уттари-уттарми çÿремешкĕн
Эпир ларнă утсем начар мар.
Хурланса-хурланса çÿремешкĕн
Пирĕн çумри мăшăрсем начар мар.

**Пухса йĕркелекенĕ Е.Илюшкина.**

### *"Девон-Кредит" АБ хисеплĕ вкладчикĕсем*

**РФ ЦБ рефинанслассин учет ставкисем улшăннипе "Девон-Кредит" Акционер банкĕ 1998 çулхи июнĕн 17-мĕшĕнчен çĕнĕрен йышăннисен тата пролонгированиленĕ вкладсене çĕнĕ процент ставкисем палăртать.**

**Вклад йышăнассин тата упрассин условийĕсем çинчен эсир "Девон-Кредит" Акционер банкĕн Нурлатри филиалĕнче ыйтса пĕлме пултаратăр. Адрес: Советская урамĕ, 179-мĕш çурт. Телефонсем: 5-29-22, 65-2-27, 65-5-25. Эпир сире "Девон-Кредит" Акционер банкне ырă сунса кĕтетпĕр.**

**Июнĕн 24-мĕшĕнче районти культура çуртĕнче Ульяновскри тир комбинатĕнче çĕленĕ атă-пушмак сутаççĕ. Ассортиментра: арçынсен, хĕрарăмсен, ачасен, шкула çÿремелли атă-пушмак, çаплах галантерея.**

## Пĕлтерÿсем

**Çĕнĕ "Горка" стенка сутатпăр, шифоньерĕ 4 алăклă. Телефон: 5-14-86.**

* * *

**Пĕр пÿлĕмлĕ хваттер тара илетĕп. Телефон: 2-29-37.**

* * *

**Телевышка патĕнче гараж сутатпăр. Телефон: 2-27-60 (ĕçри).**

* * *

**4-мĕш номерлĕ шкул патĕнчи 5 хутлă çуртăн 2-мĕш хутĕнче приватизациленĕ пĕр пÿлĕмлĕ хваттер сутăнать, пĕрлехи лаптăкĕ 31,9 тăваткал метр, пурăнмалли 19 тăваткал метр. Телефон: 2-25-61 (ĕçри).**

* * *

**Çыранçи Чаллăри икĕ пÿлĕмлĕ хваттере Нурлатри çавăн пеккипех улăштаратпăр. К.Маркс урамĕнчи 1-мĕш номерлĕ çуртри 31-мĕш хваттерте ыйтса пĕлмелле.**

* * *

**Свердловск облаçĕнчи Каменоуральск хулинчи мĕнпур енчен хăтлă икĕ пÿлĕмлĕ хваттере Нурлатри çавăн пек хваттерпе улăштаратпăр. Чишма поселокĕнче Вагиз Замаловран ыйтса пĕлмелле.**

* * *

**"Минск" мотоцикл сутăнать. Телефон: 2-19-41.**

* * *

**Шифер сутатпăр. Школьная урамĕнчи 96-мĕш çуртра 8.00 сехет хыççăн ыйтса пĕлмелле.**

* * *

**Бортлă "ГАЗель" автомобиль сутăнать, лайăх шайра. Гагарин урамĕнчи 26-мĕш çуртри 20-мĕш хваттерте 17 сехет хыççăн ыйтса пĕлмелле. Телефон: 2-28-38.**

* * *

**1997 çулта туса кăларнă ВАЗ-1113 "ОКА" васкавлă сутăнать. Телефон: 5-44-09.**

* * *

**Витмелли цинкланă шăвăç, хура тимĕр сутатпăр. Чугун çул поселокĕнчи клубри "Абсолют" магазинра ыйтса пĕлмелле. Телефонсем: 2-15-89, 2-13-69. Лицензи номерĕ Б-97 245697.**

* * *

**1986 çулта туса кăларнă ВАЗ-2108 сутăнать. Кушка районĕнчи Кивĕ Кармала ялĕнче Иван Николаевич Ибрашовран ыйтса пĕлмелле.**

**Хула варринче икĕ пÿлĕмлĕ хваттер сутăн илетĕп. Телефон: 5-25-50.**

**АКБ "СБС - АГРО" ТАТАРСКИЙ РЕГИОНАЛЬНЫЙ ФИЛИАЛ ДОПОЛНИТЕЛЬНЫЙ ОФИС 7448 ПРИНИМАЕТ ВКЛАДЫ ОТ НАСЕЛЕНИЯ.**

Рублевые вклады частных лиц (% годовых)

| | | | |
|---|---|---|---|
| Вклад до востребования | | | 4,0% |
| Пенсионный вклад довостребования | | | 16,0% |
| С фиксированной процентной ставкой | 15 дней | Срочный непополняемый | 20,0% |
| | 1 месяц + 1 день | Срочный непополняемый | 23,0% |
| | 2 месяца + 1 день | Срочный непополняемый | 24,0% |
| | 3 месяца + 1 день | Срочный непополняемый | 25,0% |
| | | Капитал не менее 25000р. | 25,5% |
| Ставка досрочного отзыва | | | 2,0% |
| Вклад частных лиц в долларах США (% годовых) | | | |
| Вклад до востребования | | | 3,5% |
| С фиксированной процентной ставкой | 1 месяц + 1 день | Срочный непополняемый | 12,0% |
| | 2 месяца + 1 день | Срочный непополняемый | 12,5% |
| | 3 месяца + 1 день | Срочный непополняемый. | 13,0% |
| | | Капитал не менее 5000 дол. | 13,5% |
| Ставка досрочного отзыва | | | 1,8% |

**Изготавливаем и принимаем к обслуживанию пластиковые карточки. Генеральная лицензия ЦБ РФ N 61 от 27.01.97г. Ждем вас по адресу: ул. Советская, 113. Телефоны для справок: 2-22-71, 2-22-20, 2-22-46.**

**Нурлатский дополнительный офис Чистопольского филиала "АК БАРС" Банка оказывает следующие услуги:**

- расчетное обслуживание юридических лиц по счетам "Депо";
- расчетно - кассовое обслуживание счетов юридических и физических лиц;
- прием вкладов населения на следующих условиях:

| Вид вклада | Ставка (% год.) | Ставка за срок,% | Мин.сум. вклада (в руб.) |
|---|---|---|---|
| до востребования "А" | 5 | - | - |
| до востребования "Зарплатный" | 28 | - | - |
| срочный 15 дней | 20 | 0,78 | 500 |
| срочный "Г" 32 дня | 22 | 1,89 | 300 |
| срочный "П" 32 дня (для пенсионеров, инвалидов) | 28 | 2,41 | 300 |
| срочный "Бюджетный" 32 дня | 28 | 2,41 | 300 |
| срочный "М" 32 дня (для молодых семей) | 24 | 2,06 | 300 |
| срочный "Б" 91 день | 24 | 6,0 | 1000 |
| срочный "Праздничный" 32 дня | 23 | 2,08 | 1000 |

**Ждем вас по адресу: г.Нурлат, ул.Школьная, 10.**

## Пĕлтерÿсем

**"Тойота-Карина" автомашина сутăнать. Нефтяниксен урамĕнчи 9-мĕш номерлĕ çуртри 16-мĕш хваттерте ыйтса пĕлмелле.**

* * *

**1992 çулта туса кăларнă "Москвич-2141" сутăнать, хакĕ 9 пин тенкĕ. Адрес: Заводская урамĕ, 13-8.**

* * *

**1996 çулта туса кăларнă ВАЗ-21061 сутăнать. Телефон: 5-37-29.**

* * *

**1996 çулта туса кăларнă ВАЗ-2107 сутатпăр. 5-21-95 номерпе 18 сехет хыççăн шăнкăравламалла.**

* * *

**Виçĕ пÿлĕмлĕ хваттер сутăнать. 2-20-99 номерпе 20 сехет хыççăн шăнкăравламалла.**

* * *

**Тасатакан сооруженисем хыçĕнче лайăх гараж сутăнать. Адрес: К.Маркс урамĕ, 7-11.**

* * *

**Хваттер тара илетĕп. Телефон: 2-11-67.**

**Нурлат районĕн тата Нурлат хула администрацийĕн аппарачĕн коллективĕ строительство енĕпе ĕçлекен пай специалисчĕн Елена Васильевна Бикинееван ашшĕ**

**Василий Федорович БИКИНЕЕВ**

**вилсе кайнипе унпа пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.**

Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.
Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тутарла, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 860. 2587.